**Тинĕсре**

Тинĕс, кала-ха мана:
Эс хумусен айĕнче
Ĕнтĕ мĕн чухлĕ çынна
Урăх кăтартрăн тĕнче?

Манăн çав чĕмсĕр йыша
Пач та кĕрес шутăм çук.
Çирĕм çулхи шухăша
Ан лапчăт эс, мăлатук.

Тинĕс — ялти пĕве мар,
Вăл — улăпла çăпала:
Тек пăтратать васкавар,
Тек пăтранать хăй çапла.

Тен, кăларасшăн ăсса
Вăл ылтăн пулă пĕрре?
Тен, çут-кĕрен парăса
Вăл кăтартасшăн пире?

Илĕртмĕше ан ĕнен,
Ан çывăхлан унпала:
Е мĕкĕрет вăл ĕнен,
Е ӳхĕрет упалла...

Эй, аслă шыв, ăçталла
Халĕ карапăн шăвас?
Эсĕ пин-пин Атăла

Шăнăçтарма та хавас.

Ĕлĕк каланă пĕри,
Петĕр патша ятлăскер:
Тинĕс — тĕнче кĕперри,
Çӳрĕр ун тăрăх чипер.

Эччĕ те çав, çамрăка
Мĕншĕн ытла хĕн кӳрес?
Тинĕс — е хăтлă сăпка,
Е — шутсăр йывăр хĕрес.

Тинĕс, кусçуль те пайтах,
Хăсăк та, юн — сан çинче,
Пурпĕр санран тасарах
Вырăн туман-ха тĕнче.

Юратмалли пур чухне
Тарăхтарма эс хастар,
Тарăхаканĕн чунне
Эс çав-çавах юраттар.

Эй, тинĕсри çын шăпи!
Тӳсĕмлисен тӳсмелле...
Ӳкĕп-и, йынăшăп-и,
Куçăм — çыран еннелле.

*Дмитриев, А. Тинĕсре : [сăвă] / А. Дмитриев // Тăван Атăл. – 2010. – № 3. – С. 91.*